Çамрăксен çулталăкĕ

Яшсемпе хĕрсен пуçаруллă пулмалла

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

– Ял тăрăхĕсенче çамрăксемпе мĕнлерех ĕçлесе пыраççĕ? Ку ыйту та паян йывăррисен шутĕнче пулни сисĕнет.

– Тĕрĕсех. Вырăнсенче çамрăксене питĕ сахал тимлĕх уйăраççĕ. Шкул ачисене шкул пĕрлештерсе тытса тăратьха. Анчах шкултан тухнисем, уйрăмах ниçта та вĕренменнисем, ĕçлеменнисем, сапалансах каяççĕ. Кашни ял тăрăхĕнчех çамрăксемпе ĕçлекен канашсем пур. Çавсен активлăрах, тăрăшуллăрах пулмалла, çине тăрса ĕçлемелле.

Акă апрельте республика шайĕнчи конференци иртмелле. Унăн ячĕ – «Ялти çамрăксен ыйтăвĕсем тата пуласлăхĕ». Çак интернет-конференцире çамрăксем тўрремĕнех хăйсене канăç паман ыйтусене Чăваш Республикин Президентне пама пултарĕç. Муркаш район çамрăкĕсемсĕр пуçне конференцие пĕр вăхăтрах Елчĕк, Йĕпреç районĕсен тата Шупашкар хула çамрăкĕсем хутшăнĕç. Пирĕн районта конференци Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăх территорийĕнче иртет.

– Депутатсен районти Пухăвĕн сумĕнче Çамрăксен парламенчĕ те йĕркеленнĕ. Вăл мĕнлерех ĕçлесе пырать Çамрăксен çулталăкĕнче?

– Пирĕн парламент членĕсем депутатсен районти Пухăвĕн комиссийĕсен ларăвĕсене хутшăнаççĕ. Унта çамрăксен ыйтăвĕсене тата прависене хускатакан тĕрлĕ саккунсене, йышăнусене тишкерес ĕçе туса пыраççĕ. Хăш-пĕр йышăнусене, программăсене хатĕрлес ĕçре пирĕн шухăшсене те шута хуни малалла ĕçлес кăмăла хăпартать.

Акă апрельте иртекен ларура «Муркаш район çамрăкĕсем – 2010-2020 çулсенче» тĕллевлĕ программăна тишкерсе тухассипе ĕçлĕпĕр. Çакăн пек программа хатĕрлесе ăна пурнăçа кĕртсе пырсан çамрăксем малалла аталанса пырĕç, вĕсемпе пĕрлех район та. Çавăн пекех пирĕн умра – районти 8-9-мĕш класс ачисем хушшинче волейбол вăйăин ăмăртăвне пуçарса ярса йĕркелесе пырасси. Парламент ятарлă куçса çўрекен кубок та хатĕрлеме шутлать. Çавăнпа та çитес ларура положение çирĕплетессине шанатпăр.

Кашнин хăйĕн вырăнĕнче пĕтĕм вăя парса тăрăшмалла. Çапла çеç пирĕн ўсĕмсем пулĕç.

Н. НИКОЛАЕВА калаçнă.

Сăн ўкерчĕкре: наставниксем – çамрăксемшĕн тĕслĕх.

Çĕр ĕçченĕн тата Çамрăксен çулталăкĕ

Ялпа хула хушшинче

(Вĕçĕ. Пуçл. 3-мĕш стр.).

Аслă ывăлĕ, Алексей, Шупашкарта строитель профессине алла илнĕскер, прораб пулса тăрăшать. Юлашки виçĕ çулне – Хусанта, маларах вара – Тюмень хулинче. «Хусанти чи çўллĕ те илемлĕ çуртсене эпир тунă. Çуртсене витмелли çирĕп материалсемпе тата вентиляциллĕ фасадсемпе тăваттăр, çавăнпа вĕсем ăшă, çав вăхăтрах питĕ хитре пулаççĕ. Çак материалсемпе строительство организацийĕсене, уйрăм çынсене тивĕçтерессипе те ĕçлетпĕр. Хамăрăн фирмăна йĕркелеме пултартăмăр», – тесе мăнаçланса калать вăл.

Шупашкарта та, Муркашра та çавăн пек çуртсем çĕклес килнине пытармасть. «Ялта пурăнас кăмăл çук-и?» – тесе ыйтсан, Алексей пурăнмалли условисем начаррине каларĕ: «Акă Исетерккĕ ялнех илер-ха, пирĕн урампа пылчăкра машина-трактор кĕрсе тухаймасть, асфальт çул çук. Çут çанталăк газĕ пурри, паллах лайăх, шыв ыйтăвĕ вара вырăнтан хускалманни курăнать. Сăмахран, манăн ачан тепĕр çулталăкран шкула каймалла. Халĕ вăл карате секцине интересленсех çўрет. Ялта эпĕ ăна çак секцие тупса параймастăп. Манăн ăна илемлĕ те хăтлă шкулта вĕрентес килет, илем, тасалăх мĕнне вăл пĕчĕкренех курса упрама хăнăхса ўстĕр. Пур шкулта та интернет сечĕ пур. Ку – питĕ лайăх, анчах çав вăхăтрах çĕнетсе юсамалли нумай. Эпĕ тен çакăн çине ытларах строитель куçĕсемпе пăхатăп пулĕ», - тет вăл çакăн пирки пĕрре мар шухăшланине пĕлтерсе.

«Сирĕн açăр-аннĕр хуçалăхра ĕçленĕ, виçĕ ача пăхса çитĕнтернĕ. Халĕ вара иккĕшех пурăнаççĕ килте. Паллах, кану кунĕсенче килетĕрха ĕнтĕ тăван киле. Вĕсем çывăхра пулсан авантарах мар-и? Ялта пурăнакан, ĕçлекен специалистсене патшалăх та тĕрлĕ енлĕ пулăшать-çке. Тĕслĕхрен, Муркашра хваттер туянас пулсан та «Çамрăк çемье» программа ĕçлени те самаях тĕкĕ парать. Пурăна киле вара хăвăр ĕмĕте, тен, Муркашрах пурнăçлама май килĕ», – тесе каласăва малалла тăсатăп.

«Халь лĕхе ĕçсем ялпа хула хушшинчех темелле пулĕ. Хваттер илесси те часах пулакан япала мар. «Çамрăк çемье» программăпа та «малтанхи капитал» сахал мар кирлĕ. Ман вара ăна пухма, эп шутласа хунă ĕнтĕ, 80 уйăха майлă ĕçлесе укçа пухса пымалла. Çав хушăрах çемьене тăрантармалла. Ялта вара ăçта ĕçлесе илес ман ун чухлĕ укçа? Укçине пухса çитернĕ вăхăта эпĕ «çамрăк çемье» ретĕнчен тухса ўкетĕп. Ку ыйту вăл мана кăна пырса лекмест, ытти нумай çамрăка та», – çапла пулчĕ хурав.

Анчах Муркаш районĕнче те вентиляциллĕ фасадлă çуртсем пуласса темĕнле пулсан та ĕненет-ха Исетерккĕ каччи. «Тăван вырăнсен çут çанталăк енĕпе кăна мар, çын тунă япаласемпе те илемлĕ пулмалла», – тет мал туртăмлă Муркаш Енĕн пултаруллă яшĕ.

Н. АНДРЕЕВА.

Редакци почтинчен

Пĕр-пĕрне ăнлансан пурăнма çăмăлтарах

Муркашри куç курманнисен вырăнти организацийĕн отчетлă пухăвĕ пулса иртрĕ. Иртнĕ çулхи кăтартусем самаях пысăк – республикăри 12 организаци хушшинче Муркашпа Элĕкри 220 куç курман инвалида пĕрлештерсе тăракан организаци чи малтисен ретĕнче. 10 енлĕ ĕç кăтартăвĕсене пĕтĕмлетнĕ хыççăн ăмăртура 1-мĕш вырăн йышăнчĕ пирĕн организаци – «Чăваш Республикинчи чи лайăх вырăнти организаци» ят çĕнсе илме пултартăмăр.

Паян пулса иртекен çĕршыври йывăрлăхсем-пăтăрмахсем чи малтан инвалидсене, ача-пăчаллă çемьесене пырса тивеççĕ. Укçа-тенкĕ енчен ахаль те çăмăл мар пурнăç кăçалхи çул татах та йывăрланса кайрĕ. Пенси шайĕ пĕчĕк пулин те, газшăн, çутăшăн тата ытти тĕрлĕ услугăсемшĕн халĕ 100 процент таранах тўлеме тивет. Уйăхсерен паракан 300-шер тенкĕ пулăшу вара хĕллехи тўлевсен пайне 20-30 процент çеç саплаштарать. Пенсин çурри ытла пайĕ тўлеме кайрĕ пулсан, инвалидăн вара епле пурăнмалла-ха? Çимелле, тумланмалла, кил хуçалăхĕнче те кулленхи тăкаксем сахал мар.

Пĕрле пухăнсан вара калаçмалли, сўтсе явмалли тем чухлех тупăнать куç курманнисен. Епле çăмăл мар пулин те, уйăхсерен иртекен пуху-канашлусене 15-20-шер çын пухăнатпăр-ха. Чуна уçса пĕр-пĕрне курса калаçатпăр. Пурнăçри савăнăçпа хуйхă-суйхăна та пĕрле пайлама тăрăшатпăр.

Уявĕсем те килсех тăраççĕ, халăхпа пĕрле эпир те савăнатпăр: тĕрлĕ ăмăртусем, куравсем, конкурссем ирттеретпĕр. Пирĕнпе яланах Муркашри тĕп библиотекăра ĕçлекенсем – вĕсем тĕрлĕ хаçат-журналпа, çĕнĕ кĕнекесемпе пире тăтăшах паллаштараççĕ. Эпир хамăр курса вулаймастпăр, çавăнпа та çак тĕл пулусем пирĕншĕн питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ. «Çавра сĕтел» хушшинчи калаçусем час-часах кучченеççемпе, вĕри чей активнипе иртеççĕ. Пирĕн обществăлла организаци ĕçне тĕрлĕ предприятисемпе организацисем пулăшнисĕр йĕркелеме май çуках. Пулăшакана Турă та пулăштăрччĕ: Муркашри перекет банкĕн коллективне, ООО «Заря» пĕрлешĕве (ертўçи П.Т. Терентьев), «Оринино» тата Ильич яч. хис. хуçалăхсене, «Визит» тата «Татьяна» суту-илў çурчĕсен ертўçисене, «Воюн» (В.И. Пушкин) пĕрлешĕве. Кулленех пулăшу сĕнекен районти социаллă хўтлĕх пайĕнче ĕçлекенсене тата район администрацийĕнчи ăнлануллă та ырă ĕçченсене пурне та тав сăмахĕ калас килет.

Пĕрне пĕри ăнлансан, пулăшса пырсан, ырă ĕçсем ытларах туса пырсан, пурăнатпăр-ха. Турри панă Çĕр çинчи пурнăçне чăтăмлăн, тўрĕ çулпах утса тухмалла пултăрччĕ пирĕн пурин те.

В. ГОРЛАНОВА,
Муркашри куç курманнисен обществин членĕ.

Тав тăватпăр

Мăшăра, кукаçие, асаттене – Вячеслав Илларионович Семенова юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн пĕтĕм тăвансене, ял-йыша, Ильич яч. хис. хуçалăха, Муркаш райпо правленине тав сăмахĕ калатпăр.

Мăшăрĕ тата ачисем.

Тăмкасси ялĕнче пурăннă Василий Дмитриевич Прохорова юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, пирĕнпе çак хуйхăна пайланăшăн Ярославка ял тăрăхĕн администрацине, Нискассинчи пĕтĕмĕшле практика врачĕн амбулаторийĕн коллективне, тăвансене, кўршĕсене, ял-йыша тата Пĕрремĕш Май выççăлккинче пурăннă Василиса Григорьевна Сорокинана пытарма пулăшнисене те тав сăмахĕ калатпăр.

Прохоровсемпе Сорокинсем.

Пĕлтерўсем. Объявления

10 апреля с 8-00 часов до 17-00 часов в РДК состоится выставка-продажа обуви из натуральной кожи ульяновской, белорусской и других российских фабрик.

Срочно продаю жилой дом с приусадебным хозяйством в с. Моргауши. Тел.: 8-927-992-20-28. 2-2.

Спутниковые антенны ТРИКОЛОР с установкой, регистрацией и обслуживанием. Тел.: 8-905-345-77-19. 6-6.

Октябрь уйăхĕнче пăруламалли хура тĕслĕ тына сутатăп. Тел.: 66-3-74, 8-906-136-56-52.

Вăкăрсем, тынасем, сурăх-такасем туянатпăр. Тел.: 8-903-063-07-57. 1-2.

Мăн Токшик ялĕнче вырăнта пурăнмалла кил-çурт сутатпăр. Асфальт çул кил тĕлĕнчен. Анкарти хыçĕнче – пĕве. Тел.: 8-906-133-98-57, 8-906-388-92-62.

Продаю недостроенный дом в д. Сыбайкасы. Цена договорная. Варианты. Тел.: 8-927-861-39-73.

Тюклана утă сутатăп. Ярак ялĕ. Тел.: 8-906-382-03-94, 65-2-41.

Июнĕн 5-мĕшĕнче тăваттăмĕш хут пăруламалли хурашурă тĕслĕ ĕне сутатăп. Тел.: 8-927-998-53-83.

Удостоверение о праве на льготы серии А №346541 от 29.07.85 г., выданное на имя Михаила Георгиевича Казакова, считать недействительным.

КĂВАКАЛ, ЧĂХ, БРОЙЛЕР, ХУР ЧĔППИСЕМ кама мĕн чухлĕ кирлĕ, шăнкăравласа пĕлтерĕр. Чĕпсене çитĕнтерме белокпа, витаминпа, минералла япаласемпе пуян апат-симĕç те сутатпăр. Ыйтса пĕлмелли телефонĕсем: 62-5-13, 8-927-866-79-33. Муркаш вĕçĕнчи ветлечебница аптеки.

Покупаю металлолом. Требуются газорезчики. Адрес: д. Москакасы, ул. Московская, 54 «б». Тел.: 8-961-341-12-70, 8-905-341-53-11.

Приглашаем на семинар, который состоится 10 апреля 2009 года в актовом зале на 2 этаже администрации Моргаушского района в рамках нац. проекта «Доступное и комфортное жилье – гражданам России».
В семинаре будут участвовать специалисты администрации Моргаушского района ЧР, Моргаушского отдела Сбербанка, ЗАО «МСО «Моргаушская».
Программа семинара: приобретение жилья молодыми семьями, молодыми специалистами по программе ипотечного кредитования. Начало в 10 часов.

ТСЖ «Надежда » Моргаушского района объявляет комиссионный отбор предприятий и организаций по капитальному ремонту многоквартирных домов на 2009 год:

Место выполнения работ (адрес многоквартирного дома)	Объем работ (площадь объекта, кв.м.)	Краткое описание работ	Стоимость работ, руб.	Сроки выполнения работ
д. №6 по ул. Молодежная в д. Москакасы	320	Ремонт крыши, ремонт подвала	466078	После заключения договора в течение двух месяцев
д. №8 по ул. Молодежная в д. Москакасы	320	Ремонт крыши, ремонт подвала	466078	После заключения договора в течение двух месяцев

Документы для участия в комиссионном отборе принимаются в запечатанном конверте не позднее 9.00 ч. 29.04.2009 г. Дата вскрытия конвертов: 10.00 ч 29 апреля 2009 года. Подведение итогов комиссионного отбора в 10.00 ч. 05 мая 2009 года.

Обращаться в комиссию по адресу: с. Моргауши, ул. Мира, д.6, каб. 207 тел. 62-4-39.

Подробная информация на сайте morgau@cap.ru

11 апреля 2009 г. в спортзале «Тиушская начальная школа-детский сад» состоится открытый турнир по волейболу среди мужских команд на переходящий кубок памяти Заслуженного работника сельского хозяйства ЧАССР, депутата Верховного Совета ЧАССР Михайлова Александра Михайловича. Начало турнира в 10.00 часов.

«Ударник» хуçалăх дирекцийĕ кунта инженер пулса ĕçлекен Илья Васильевич Алексеевăн тăван

АМĂШĔ

вилсе кайнă пирки вĕсен çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

«Оринино» хуçалăх коллективĕ кунта нумай çул хушши уй-хир бригадин бригадирĕ пулса ĕçленĕ

Ольга Тимофеевна ОВЧИННИКОВА

йывăр чирленĕ хыççăн вăхăтсăр вилсе кайнă пирки унăн çемйипе, тăванĕсемпе чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

Коллектив Управления Пенсионного фонда в Моргаушском районе Чувашской Республики – Чувашии выражает глубокое соболезнование старшему специалисту отдела персонифицированного учета и взаимодействия со страхователями и застрахованными лицами, взыскания недоимки Дмитриевой Таисии Николаевне в связи с кончиной матери

ОВЧИННИКОВОЙ Ольги Тимофеевны.

Моргаушская районная газета «Çĕнтерў ялавĕ»

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерў ялавĕ» Минкультуры Чувашии.

Главный редактор А.И. ТИХОНОВ.
АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 62-1-36, заместитель главного редактора - 62-2-82, бухгалтерия - 62-1-35, отделы: общественно-политической жизни - 62-2-82, экономики - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации ПИ № ТУ 21-00025 от 26 декабря 2008 года.

Объем 1 усл. печатный лист.
Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.
Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.

ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.
Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Дежурный по номеру Шапошников В.Л.
Номер подписан 07.04.2009 г.
Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.
Заказ Тираж 3850.

Номер набран и сверстан в РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерў ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.